27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 18 ЫТЛАРИКУН 141 (6636) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Генерал-полковника ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕшпе 2-мĕш фронтсен çарĕсем, хăйсен соединенийĕсем пĕр-пĕрне пулăшса пынипе, паян, июлĕн 16-мĕшĕнче, ГРОДНО хулине крепоçне штурмласа туртса илнĕ. ГРОДНО хули — нимĕçсен оборонин çирĕплетнĕ паха районĕ пулса тăрать, вăл Хĕвелтухăç Пруссин чиккине пымалли вырăнсене хÿтĕлесе тăрать.

ГРОДНО хулине илессишĕн пынă çапăçусенче ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЧЕПУРКИН генерал-майорăн, БРИКЕЛЬ генерал-майорăн, НАЛОЖНЫЙ генерал-майорăн кавалеристсем; ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникăн, БОЛДИН генерал-полковникăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-майорăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ПОЛЕВИК генерал-майорăн, СТРИЖЕНКО генерал-майорăн, СЛИЦ генерал-майорăн, ДЕМИН полковникăн, ШЕННИКОВ полковникăн çарĕсем; СЕМИН генерал-майорăн, артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВАН, артиллери генерал-майорĕн НЕФЕДОВАН, МУЗЫЧЕНКО полковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн, УВАРОВ полковникăн, ЧЕРКАСОВ полковникăн, ВЫБОРОВ подполковникăн, КОЗИН подполковникăн, МАЙОРОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн НЕЦВЕТАЙЛАН, ШМЫРОВ подполковникăн, КАРПОВ подполковникăн, ХУХРИН подполковникăн, ЛЕГЕЗА полковникăн, ГАЙДАЕНКО майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИН, ВУСС полковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, ПРУТКОВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн, ПИЛЬЩИКОВ подполковникăн, ГОРШУНОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн МАРЬИНАН, ПРОНЕВИЧ полковникăн, МЕЛЬНИКОВ полковникăн, СОЛЯНКИН майорăн саперĕсем тата БЕЛЫШЕВ полковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, МАРКОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ГРОДНО хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ГРОДНЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратăп.

Паян, июлĕн 16-мĕшĕнче, 23 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕшпе 2-мĕш фронтсен паттăр çарĕсене, ГРОДНО хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан çарсене, ГРОДНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 16-мĕшĕ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне СТАЛИН юлташа

Чăваш республикинчи Чурачăк районĕнчи ĕçсыннисем, Хĕрлĕ Çар тунă чаплă çĕнтерÿсемпе хавасланса тата нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма фронта мĕнпур вăйпа пулăшас тесе, çапăçу техники тума хăйсем перекетленĕ укçаран 1.157.493 тенкĕ пухса хыврĕç.

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем, пĕр туслă семьепе ĕçлесе, çуракине срокчен тата малта тăракан агротехникăна пăхăнса лайăх вĕçлесе, çураки планне 101,6 процент тултарчĕç.

Сире, пирĕн юратнă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ, эпир малашне те хастарлăн ĕçлесе, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкма тата хамăр çĕршывран хăваласа кăларма мухтавлă Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшăпăр, тесе шантарса калатпăр.

ВКП(б) Чурачăк райкомĕн секретарĕ АРТЕМЬЕВ.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председателĕ СКВОРЦОВ.

Чурачăк, Чăваш АССР-ĕ

ВКП(б) Чурачăк райкомĕн секретарьне АРТЕМЬЕВ юлташа

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председательне СКВОРЦОВ юлташа

Чурачăк районĕнчи ĕçсыннисене, çапăçу техники тума 1.157.493 тенкĕ пухнăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ИДРИЦА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманпа çапăçса малалла талăнса пынă. Калинин облаçĕнчи округ центрне ОПОЧКА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ИСАИН, ЖЕВЛОКИ, ЗУЕВО, ТОМСИНО, ДУБРОВКА, МАЛЬКОВО, БЕЛОГУРОВА, ЧЕРНОВО ятлă пысăк ялсем.

СВЕНЦЯНЫ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — БУЦЯНЫ, ОНИКШТЫ, СВАНТЫ, ВИДЕНИШКИ, ШЕШОЛИ, ГЕЛВАНЫ, ДАРКШАНЫ ятлă пысăк ялсем тата БИЧАНЫ, ОНИКШТЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ВИЛЬНЮС хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени вăйлатса пырса, Литва ССР-ĕн уезд центрне АЛИТУС хулине тата крепоçне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КОШЕДАРЫ, БУТРИМАНЦЫ, ПУНИ, НЕМАНОЙЦЕ, ДРУСКЕНИКИ, ШАНДУБРА, ПРИВАЛКА, ГОЖА ятлă пысăк ялсем тата КОШЕДАРЫ ятлă узловой чугун çул станцийĕ. АЛИТУС хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем 120 километр сарлакĕш фронтра НЕМАН шывĕ патне пырса тухнă, чылай участоксенче çав шыв урлă каçнă та унăн хĕвеланăç хĕрринче плацдармсем туртса илнĕ.

ВОЛКОВЫСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем РОССЬ шывĕ урлă каçнă та тăшманпа çапăçса ун шывĕн хĕвеланăç енче темиçе пункт туртса илнĕ, вăл шутра — ЗАГУЗЯНЫ, ОГРЫЗКИ, ВОЛПА, СТАНЬКОВЩИ, КРАСНОЕ СЕЛО.

СЛОНИМ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ИЗАБЕЛИН, ЛОПЕНИЦА, МАЛАЯ, ПОРОЗОВО, НОВЫЙ ДВОР, ЛЕЖАЙКА, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, КОЛЯДИЧИ, СОШИЦА ятлă пысăк ялсем.

ПИНСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Пинск облаçĕнчи район центрне ЛОГИШИН хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 20 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПОРЕЧЬЕ, ВЕЛЕСНИЦА, ПАРШЕВИЧИ, БОГУШЕВО, ЕВЛАШИ ятлă пысăк ялсем тата ДОРЕЧЬЕ, МОЛОДКОВИЧИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Июлĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 101 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ДВИНСК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ТАТА КОБРИНПА ЯНУВ ЧУГУН ÇУЛ СТАНЦИЙĔСЕНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Июлĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Двинск чугун çул узелне тата Кобринпа Янув чугун çул станцийĕсене (Пинск хулинчен хĕвеланăçнерехре) тапăннă. Нимĕçсен çар эшелонĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсем çине тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Двинск чугун çул узелĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, 20 тĕлте пушар тухнă. Вăрçă техникипе боеприпассем тиесе лартнă вагонсемпе платформăсем çуннă. Пушарсенче темиçе вăйлă взрыв пулнă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе боеприпассен эшелонĕ сирпĕнсе кайнă.

Кобринпа Янув станцийĕсенче, бомбăсем пăрахнине пула, 7 поезда вут хыпса илнĕ. Йышлă пушарсенче темиçе хутчен вăйлă взрывсем пулнă. Кобрин станцийĕнче тата горючий пысăк склачĕсене вут тивертсе янă.

ИЮЛĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 16-мĕшĕнче СПОЧКА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПОТАШЕВО, БАРСАНОВО, ТОБОЛИНО, МАКУШИНО, БЕРЕЗАВЕЦ, МОЗУЛИ, МИРОЕДЫ, КАМЕНКА, ЖАРКОВО, КУЗНЕЦОВКА, КОСТОВО, КРАСОВО ятлă пысăк ялсем тата КУЗНЕЦОВКА ятлă чугун çул станцийĕ.

ВИЛЬНЮС хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПОСУЛЕ, БОРТКУНЫ, КРОНИ, КОВАЛИ, УЖУГОСТЬ, СТОКЛИШКИ, ДОРСУНИШКИ, ЕЗНО, БИРШТАНЫ ятлă пысăк ялсем тата ПАГЬЕЛИС ятлă чугун çул станцийĕ.

АЛИТУС хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах Неман шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдарма аслăлатассăшăн ăнăçлăн çапăçнă, 40 ял ытла туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕшпе 2-мĕш фронтсен çарĕсем июлĕн 16-мĕшĕнче виçĕ кун хушши çапăçнă хыççăн ГРОДНО хулипе крепоçне, пысăк чугун çул узелĕ тата нимĕçсен оборонин çирĕплетнĕ паха районĕ пулса тăраканскерне, штурмласа туртса илнĕ.

ВОЛКОВЫСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла талăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КОМОТОВО, ДУБРОВЛЯНЫ, ЖИЛИЧИ, СТРУГА, НОВОСАДЫ, ДУЛЕВЦЫ, ШЕВКИ, ШАНДРЫ, ГНЕДНО, МСТИБОВО ятлă пысăк ялсем.

СЛОНИМ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Брест облаçĕнчи район центрне БЕРЕЗА-КАРТУЗСКАЯ ятлă пысăк яла илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГОЛОБУДЫ, ЮШКЕВИЧИ, БОРКИ, ГАЛЕНЫ, РОВБИЦК, МУРАВА, КУПИЧИ, СТАРОВОЛЯ, БОРТНОВИЧИ, СЕЛЕЦ, КАБАНИ, СКГНЕВИЧИ, МОШКОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата БЕРЕЗА-КАРТУЗСКАЯ ятлă чугун çул станцийĕ.

ПИНСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступлени вăйлатса пырса, Пинск облаçĕнчи район центрĕсене ЯНОВ хулине тата ТЕЛЕХАНЫ яле туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ТЫШКОВИЧИ, МОТОЛЬ, КАЛИТЫ, ТРЫЛИСКИ, ЛЕСКОВИЧИ-РУДСК, ФРАНОПОЛЬ ятлă пысăк ялсем тата ЮХНОВИЧИ, ЯНОВ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 144 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БРЕСТПА КРУСТПИЛОС ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ ТАТА ВЛОДАВАПА ДРОГИЧИН ЧУГУН ÇУЛ СТАНЦИЙĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци, йышлăн вĕçсе кайса, Брест тата Крустпилос чугун çул узелĕсене тапăннă. Нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине тата тăшманăн вăрçă склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Брест чугун çул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула темиçе вунă тĕлте пушар тухнă. Узелăн пĕтĕм çурçĕр пайне вут хыпса илнĕ. Боеприпаспа вăрçă техники тиенĕ эшелонсем çуннă, пушарсенче нумай взрывсем пулса пынă, вĕсем хушшинче пилĕк вăйлă взрыв пулнă. Узелăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче пысăк горючи склачĕсем сирпĕнсе кайнă.

Крустпилос чугун çул узелĕнче, бомбăсем тÿрех пырса тивнипе, темиçе эшелон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Пушарсем тухнă. Уйрăмах вăйлă пушарсем чугун çул узелĕн çурçĕр-хĕвелтухăç тата çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче пулнă. Çавăн пекех тата вăйлă пушар тăшманăн çар склачĕсен районĕнче тухнă, унта вăйлă взрывсем пулнă.

Çав çĕрех пирĕн авиаци нимĕçсен Брест хулинчен кăнтăртарахра ларакан Влодава станцийĕнчи тата Пинск хулинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Дрогичин станцийĕнчи çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

☆ ☆ ☆

Опочка хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Ĕнер каçхине тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та анлă фронтпа Исса шывĕ урлă каçнă. Опочка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем Кузнецовка чугун çул станцине туртса илнĕ, наступление вăйлатса пырса, Себеж хули çывăхне тухнă. Кун каçиччен 1.500 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 11 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă, 87 хир тупипе миномет, 100 пулемета яхăн, боеприпас, горючи тата тĕрлĕ çар пурлăхĕн 20 складне тытса илнĕ. Нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Вильнюс хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем васкасах çĕнĕ танковăй дивизи илсе пынă та ăна çул çинчех тÿрех çапăçăва кĕртсе янă. Нумай вăхăт хушши пынă çапăçу хыççăн совет чаçĕсем тăшмана йывăр çухату кÿнĕ, вара нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Малалла куçса пырса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Каунас хулинчен 22 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Пошуле ялне, туртса илнĕ. Тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне тата 11 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири 3-мĕшпе 2-мĕш фронтсен çарĕсем паян ирхине ирех чугун çулсен тата шоссе çулĕсен пысăк узелне Гродно хулипе крепоçне туртса илнĕ. Пирĕн утлă çар соединенийĕсем, хăйсен çулĕ çинчи тăшман оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, Гродно хулине çурçĕртен тата çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчен тапса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма пуçланă. Часах Гродно патне Хĕрлĕ Çарăн пехота, танковăй тата артиллери чаçĕсем пырса çитнĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăрса çапăçнă, вăл çав хулана кирек мĕн пулсан та хăй аллинче хăварма тăрăшнă. Нимĕçсем çакăнти çапăçăва хăйсен сапер, строительство, хуçалăх тата санитари подразделенийĕсене кĕртсе янă. Тăшман вăйĕсене халран янă хыççăн пирĕн çарсем Гродно хулине штурмласа туртса илнĕ. Гродно хулишĕн виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче совет чаçĕсем тăшманăн темиçе соединенине, вăл шутра нимĕçсен 50-мĕш пехотнăй дивизине, çĕмĕрсе тăкнă. 50-мĕш номерлĕ дивизие Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсенчен Крыма тасатнă чухнех пĕтерсе тăкнăччĕ. Ун хыççăн нимĕçсем хăйсен Норвегире тăракан чаçĕсенчен çĕнĕ дивизи тунă та, ăна каллех 50-мĕш номер дивизи тесе ят парса, Совет Союзĕпе Германи фронтне янă.

* * *

Волковыск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах Россь шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдарма аслăлатассăшăн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, нимĕçсене халăх пурăнакан чылай пунктсенчен хĕссе кăларнă. Нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. 400 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тата унсăр пуçне пирĕн автоматчиксен отрячĕсем вăрмансене шăртласа тухнă чухне 300 нимĕçе тытнă.

* * *

Слоним хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Брест облаçĕнчи район центрне Береза-Картузская ятлă яла туртса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем вăрманлă-шурлăхлă вырăнта 20 километр малалла кайнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне, 5 танкне, минометсен пĕр батарейине тата 2 артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. 100 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕрти флотăн торпеда катерĕсем, 3-мĕш рангри капитан Алексеев командир пулса ертсе пынипе, тăшман карапĕсене пырса çапнă. Торпедăсем ярса, тăшманăн 4 транспортне, пĕр танкерне, 2 миноносецне тата хуралта çÿрекен 2 карапне шыва путарнă. Пирĕн пĕр катер хăйĕн базине таврăнман.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн пĕтĕмĕшпе 7.000 тонна таякан 2 транспортне шыва путарнă.

Пирĕн çĕршывра ача амăшĕсемпе ачасемшĕн тăрăшасси—хисеплĕ ĕç

ШУПАШКАР. Хулара пурăнакан М. Мухамедзянова юлташ çичĕ ача ÿстерет. Унăн аслă ачи Хусанта вĕренет, кĕçĕнни халĕ виçĕ çула кайнă. Указпа паллашнă хыççăн Мухамедзянова юлташ çапла калаçрĕ:

— Пирĕн çĕршыв вăрçă вăхăтĕнче те ача амăшĕсемпе ачасемшĕн куллен тимлĕн тăрăшать. Партипе правительство мана ачасене пăхса ÿстерме нумай тĕрлĕ пулăшу парĕç. Çĕнĕ Указ ача амăшĕсемпе ачасене пулăшас ĕçе тата та вăйлатма кушать. Государство пулăшнипе эпĕ хамăн ачасене çĕршыва юратакан, сывлăхлă та пултаруллă çынсем туса ÿстеретĕп. Государство çавăн пек тимлĕн тăрăшни пире питĕ савăнтарать.

Фронтовик арăмĕ çĕнĕ Указа саламлать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Агитаторсемпе вулавçăсем çĕнĕ Указа ăнлантарса парас ĕçпе колхозсенче калаçусем ирттерĕççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Кушар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри агитатор Нестерова юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕн Указне пичетленĕ хаçатсене илсе пынă фронтовиксен арăмĕсене вуласа пачĕ. Фронтовик арăмĕ Екатерина Дмитриева юлташ Указа итленĕ хыççăн хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене каласа пĕлтерчĕ:

— Манăн пилĕк ача ÿсет, — терĕ вăл. — Чи асли халĕ 17 çулта. Упăшка фронтра. Чăн та, çак вăрçă вăхăтĕнчи куллен ачасене пăхса ÿстерме çăмăл мар. Анчах эпĕ вĕсене таса сывлăхлă, ĕçлеме юратакан çынсем туса ÿстерес пирки иккĕленместĕп. Мĕншĕн тесен пире государство яланах хытă пулăшса тăрать. Çĕнĕ Указ çамрăк ăрăва лайăх ÿстерме майсем туса парать. Ача амăшĕн мĕнпур юратăвĕ ачасене пăхса ÿстерме çĕре кайĕ.

Колхозниксем çĕнĕ Указпа паллашнă хыççăн ача амăшĕсемпе ачасене пулăшас ĕçе татах та вăйлатма пулаççĕ.

Апат-çимĕç комбиначĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕмĕрле районĕнчи комбинат (директорĕ И. Сиротта юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ И. Подклетнов юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Вăл Кувакино районĕнчи тата Канашри комбинатсемпе ăмăртса ĕçлесе, июнь уйăхĕнче продукци кăлармалли плана 412 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Кувакино районĕнчи комбинатран илсе, Çĕмĕрле районĕнчи апат-çимĕç комбинатне памалла тунă тата ăна ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме 6 пин тенкĕ укçа панă.

Июнь уйăхĕнче Калинино, Çĕрпÿ, Куславкка, Сĕнтĕр районĕсенчи, Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçлеменне палăртнă.

ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН КУННЕ УЯВЛАНИ

Шупашкарти çамрăксем физкультурниксен кунне уявласа ирттерме «Сталинец» спорт обществин стадионне пухăнчĕç.

Кăнтăрла пĕр сехет те 30 минутра ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Трусова юлташ çамрăксен митингне уçать. Митинга пухăннă çамрăксене ВКП(б) хула комитечĕ ячĕпе Ардаматский юлташ, физкультурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕ ячĕпе Васильев юлташ саламлаççĕ.

Кун хыççăн физкультурниксен парачĕ пулса иртрĕ. Унта «Динамо», «Ĕç резервĕсем», «Сталинец», «Спартак», «Буревестник» тата «Медик» спорт обществисен коллективĕсем пулчĕç. Парада Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева юлташ йышăнчĕ.

Митинг хыççăн çăмăл атлетика ăмăртăвĕсем пуçланчĕç. Малтанах 100 метр хушши ăмăртса чупакансем тухаççĕ. Ăмăртура «Динамо» обществин членĕ Исламов юлташ мала тухать. 100 метр чупас тĕлĕшпе хĕрарăмсен ăмăртăвĕнче «Буревестник» обществин членĕ Маркова юлташ пĕрремĕш вырăна тухать. 800 метр чупас тĕлĕшпе хĕрарăмсен ăмăртăвĕнче спорт мастерĕ Мария Гущина мала тухать. Арçынсен 1000 метр тăршшĕ чупас тĕлĕшпе пулса иртнĕ ăмăртăвĕ те лайăх иртрĕ. Унта «Динамо» обществин членĕ Капитонов юлташ мала тухрĕ. Кун хыççăн эстафета тата вăйăсем пулса иртрĕç.

Физкультурниксен уявĕ футбол вăййипе вĕçленчĕ. Стадион çинче «Крылья Советов» командипе (Горький хули) «Сталинец» команди (Шупашкар) тĕл пулса вылярĕç. Футбол вăййи 10:2 шутпа «Крылья советов» команди çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Физкультурниксен кунне Канашра, Çĕрпÿре, Улатăрта тата ытти хуласемпе район центрĕсенче те уявласа ирттернĕ.

А. П. Чехов вилни 40 çул тултарнă ятпа Пысăк театрта пулса иртнĕ чаплă пуху

Июлĕн 15-мĕшĕнче Мускавра, Пысăк театрта, А. П. Чехов вилни 40 çул тултарнă ятпа чаплă пуху пулса иртнĕ. Кунта столицăри общественноçăн нумай тĕрлĕ представителĕсем: писательсем, артистсем, ученнăйсем, стахановецсем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем пуçтарăннă. Чĕрĕ чечексемпе илемлетсе, кĕмĕл тĕспе сăрласа тунă рама ăшĕнче пĕтĕм совет халăхĕ юратнă писателĕн портречĕ тăрать.

Чаплă пухăва Чехов вилни 40 çул тултарнă куна паллă тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри Комитетăн председателĕ В. П. Потемкин юлташ уçрĕ. Вăл тĕрĕслĕх çинче никĕсленсе тăракан пурнăç патне, çăнлăхпа чун илемлĕхĕ патне хăйĕн пĕтĕм вăй-хăвачĕпе туртăннă писателĕн ĕмĕчĕсем çинчен калать.

Çав çăнлăх патне писатель хăйĕн талантлă произведенийĕсемпе чĕннĕ, вăл ăна чăн-чăн художник туйăмĕпе таçтан инçетрен курса тăнă. Писателĕн ĕмĕчĕ Октябрьти социализмлă революци пулнă хыççăн кăна пурнăçа кĕчĕ, кунта пирĕн пурнăçăн законĕ—тĕнчене улăштаракан творчествăллă ĕç пулса тăчĕ, унсăрăн, Чехов каланă тăрăх, пурăнни те усси çук.

«Чехов вилнĕренпе 40 çул иртрĕ,—тет Потемкин юлташ. — Пирĕн тăван çĕршыв чаппа мухтавăн чи çÿлĕ тÿпине çĕкленчĕ. Ун çине халĕ ĕнтĕ мĕнпур этемлĕх пăхса тăрать. Пирĕн çĕршывăн халăхĕсемпе воинĕсем, культурăпа прогресăн тата цивилизацин чи усал тăшманĕсене çĕнтерсе пырса, тĕнчене ирĕклĕх кÿреççĕ. Чехов халĕ хăйĕн ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕнине курас пулсассăн телейлĕ пулнă пулĕччĕ. Унăн тăван Российи, çĕнĕ пурнăç туса хурса, тĕрĕслĕхшĕн пыракан Отечественнăй вăрçăра çĕнтерÿсем туса, ĕмĕрлĕхе чапа тухнишĕн мухтанса савăннă пулĕччĕ».

Чехов творчестви çинчен, вăл пирĕн çĕршыври тата тĕнчери литературăна мĕнле влияни пани çинчен ССР Союзĕнчи совет писателĕсен Союзĕн Правлени председателĕ Н. Тихонов юлташ доклад туса панă.

Мускаври художествăллă театрăн историйĕнче тата пĕтĕм творчествăллă пурнăçĕнче Чехов çав тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ССР Союзĕн халăх артисчĕ И. М. Москвин сăмах каланă.

Писатель Леонид Леонов çулăмлă та витĕмлĕ сăмах тухса каланă.

ССР Союзĕн халăх артистки О. Л. Книппер—Чехова трибуна умне тухнине чаплă пухăва пынисем ăшшăн кĕтсе илнĕ. Вăл хăйĕн хумхануллă сăмахне нимĕçсем Мускав çинелле наступлени туса килнĕ хăрушă сехетре Сталин юлташ пирĕн вырăс халăхĕн чапĕпе хăватне палăртакан чи паха ятсем хушшинче Чехов ятне те асăннă куна аса илнинчен пуçларĕ.

— Чехов тăван çĕршыва çĕнетес тата ăна телей кÿрес çулăмлă та аслă ĕмĕтпе пурăннă, — тет А. П. Чеховăн арăмĕ,—Çавăн çинчен вăл хăйĕн кĕнекисенче çирĕп шанчăк хывса, хĕрÿллĕн çырнă. Пирĕн çĕршывра Чехов ĕмĕтленнисем пурнăçа кĕчĕç. Пирĕн халăх чи хаяр çапăçусем вăхăтĕнче Чехов вилнĕренпе 40 çул тултарнине анлăн палăртни—халăх хăйĕн нациллĕ художникĕ вырăнне хурса хисеплекен писателе пысăк парне пани пулать. Çавăншăн ĕнтĕ халăха, правительствăна, партие, тăван Сталина пĕтĕм чун-чĕререн пысăк спасибо калас килет! (ТАСС).

Велосипедистсем Сталинградран Ленинграда çити каяççĕ

Июлĕн 9-мĕшĕнче велосипедистсен Сталинградран Ленинграда çитмелли чупăвĕ пуçланнă. Велосипедистсен 2.000 километр каймалла пулать. Вĕсем Тамбов, Рязань, Мускав, Калинин тата Новгород урлă каяççĕ. Мускавра велосипедистсем июлĕн 16-мĕшĕнче — физкультурниксен Пĕтĕм Союзри кунĕнче пулаççĕ. Ленинграда вĕсен июлĕн 23-мĕшĕнче — Тинĕс-Çар флочĕн кунĕнче çитмелле.

Чупу командирĕ Тимохов юлташ хăйпе пĕрле Сталинградри ĕççыннисен Ленинградри ĕççыннисене çырнă çырăвне илсе пырать. (ТАСС).

А. П. Чехов вилнĕренпе 40 çул тултарнине паллă туни

Вырăссен аслă писателĕ А. П. Чехов вилнĕренпе 40 çул тултарнине Шупашкарти ĕççыннисем анлăн паллă турĕç. Чăваш Совет писателĕсен правленийĕпе филармони июлĕн 15-мĕшĕнче Пионерсен çуртĕнче юбилей каçĕ ирттерчĕç. Унта писатель И. Тукташ «А. П. Чехов — вырăссен аслă писателĕ» темăпа доклад туса пачĕ. Чехов ячĕпе ирттернĕ концерта чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ, филармони артисчĕсем хутшăнчĕç.

Парти кабинечĕ А. П. Чехов çинчен лекцисем ирттернĕ. Парти кабинетĕнче Чеховăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставка организациленĕ. Лекцисемпе калаçусем предприятисенче те: табак фабрикинче, индпошив мастерскойĕнче тата ытти çĕрте те ирттернĕ.

Чăвашсен государство издательстви Чеховăн «Калавсен сборникне» тата «6-мĕш номерлĕ палата» ятлă калавне чăвашла пичетлесе кăларнă.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Молотов ячĕпе тăракан колхозра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Байсубино ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене уйхиртен пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Çумкурăксене икĕ хут çумласа тасатнă, комбайнпа вырма 50 гектар участок уйăрнă. Çак лаптăк çинче пĕр çумкурăкĕ те çук.

Тырă вырма тухсан 4-мĕшпе 5-мĕш кунĕсенчех кĕлте кӳме тата авăн çапма тытăнма палăртнă, транспорт инвентарĕсене юсаса хатĕрленĕ. Колхозри плотниксем П. Сергеев, И. Андреев юлташсем икĕ стан урапа çĕнĕрен тунă, чылай вăхăт хушши юрăхсăр выртнă 19 стан урапана юсанă. Колхозри кашни кӳлекен лаша валли урапа, хăмăт-ĕнерчĕк çителĕклĕ.

Халĕ кашни колхозник уборкăна хатĕрленĕ çĕре хутшăнать. М. Яковлева, М. Иванова колхозницăсем кĕлте кӳме вĕренсем, урапасем валли тевĕшсем явса хатĕрлерĕç. Вĕсем кашни кун 10 тилхеперен кая мар яваççĕ, кунсăр пуçне урхалăхсемпе хырăмсалăхсем, чĕлпĕрсем явса хунă.

Колхоз уборка иртттермелли план тунă. Кăçал колхозра столовăй, ача ясли пулать. Столовăйра апат-хатĕрлеме продуктсем çителĕклĕ. Уборка ĕçне кăварт вĕçлесе, авăн çапас ĕçе органиованно тытăнас тесе, тырăсене пуринчен ытларах жнейкăсемпе вырма, кĕреплеллĕ çавасемпе çулма шутлаççĕ. Колхозра икĕ жнейка, 15 кĕреплеллĕ çава хатĕрленĕ.

Ĕçĕн ăнăçăвĕ ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен килет. Çавăнпа та бригадăсене звенасем çине уйăрнă, кашни звено тата колхозник хăйне уйăрса панă участоксенче ĕçлемелле тунă.

— Пирĕн колхозри бригадирсем Савельевпа Сергеева юлташсем иккĕшĕ пĕрпĕринпе килĕштерсе тата ăмăртса ĕçлеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, пĕр-пĕрин опычĕпе ялăнах ĕçре усă кураççĕ,—тет колхоз председателĕ П. Данилов юлташ.

Колхозниксем фронтовиксем çине пысăк шанăç хунă. Çавна пула та ĕнтĕ Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем фронтовиксен семьисене 68 пăт тырă кивçен парса пулăшнă. Çавăн пекех колхоз фондĕнчен 70 пăт тырă панă.

Колхоз председателĕ Данилов юлташ колхозниксене килĕштерсе, пĕр-пĕрне юратса ĕçлеме, çав вăхăтрах кахалсене питлеме вĕрентнĕ. Çавăнпа та ку колхозра пур ĕçе те вăхăтра тăваççĕ. Акă халь утă çулас ĕç хĕрсе пынă вăхăтрах колхозри плотниксем сысна(?)сем, сурăхсем валли çĕнĕ витесем туса лартнă, ĕне фермин витине аслăлатнă, тĕплĕн юсанă. Витесен тăррисене пурне те çĕнĕрен витнĕ. Кашни вите умне уйрăм карта(?)сем тытнă.

Выльăхсем валли апат ытлин-ситлин хатĕрлес тесе 5 центнер ытла арăмути, 4 центнер вĕлтрен пуçтарнă, силос та чылай хывнă.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз, иртнĕ çулсенче кая юлса пынăскер, халĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатса пырать. Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче колхозниксем малтисен ретне тухма тăрăшаççĕ.

С. ШАДИН.

Тырă вырма хатĕрленеççĕ

Шăмăршă районĕнчи «Заря» колхоз пур ĕçре те малта пырать. Кунта ĕç дисциплини лайăх, пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа туса пыраççĕ.

Колхозра 148 хуçалăх. Пĕрлешӳллĕ ĕçе активлăн хутшăнман колхозник пĕрре те çук темелле. Халĕ кашни хуçалăх хăйсене кирлĕ чухлĕ çурла хатĕрленĕ, пĕтĕмпех шăлланă. Пурĕ 429 çурла хатĕр. Çавăн пекех 143 çава туптаса хунă, вĕсене валли кĕреплесем те пур.

Кашни бригада, звено тата уйрăм колхозник хăш кун, ăçта ĕçлемеллине палăртса правлени тĕплĕ план тунă. Вăл ĕç планне бригадăсенче кăна мар, звенасенче те сӳтсе-явнă.

Тырпулсене пухма тухсан, пĕрлешӳллĕ столовăй пулать, ачасене валли ясли уçма та продуктсем çителĕклĕ, çуртйĕр тата савăт-сапа хатĕрленĕ.

Е. ТИМОФЕЕВА.

Çĕрулми чечекне татса пăрахни мĕнле усă парать

Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ çумăрсем хыççăн çĕрулми вăйлăн ӳсме тытăнчĕ. Пысăк тухăçлă çĕрулми туса илме кăçал пур условисем те çителĕклĕ. Нумай колхозсенче халĕ çĕрулми чечеке ларма (çурăлма) тытăнать. Çĕрулми аври çинчи чечеке вăл сараличчен татса пăрахни унăн тухăçне ӳстермелли майсенчен пĕри пулса тăрать. Ир(т)терех ĕлкĕрекен «Ранняя роза», «Американка» тата «Эпикур» ятлă сортсен чечекĕсене сараличчен татса пăрахни уйрăмах питĕ усăллă. Çĕрулмин çак сорчĕсем пирĕн республикăри колхозсенче нумайĕшĕсенче пур.

С. А. Кукарников агроном, çĕрулми чечекне вăл сараличчен татса пăрахас ĕçе темиçе çул туса пынăскер, çак меслет çĕрулми тухăçне палăрмаллах ӳстерни çинчен пĕлтерет.

Çак ĕç çăмăл, çавăнпа та ăна пур çĕрте те пурнăçлама май пур. Ăна çапла тумалла. Çĕрулми аври тăррине чечек папакки туксан, ăна çиелги çулçипе пĕрлех татса пăрахмалла. Пĕр-икĕ эрнерен татса пăрахнă вырăнта чечек турачĕсем татах тухаççĕ, хăшĕ-пĕрисем чечек папакне пухма тытăнаççĕ. Вĕсене те каллех татса пăрахмалла.

Çапла вара çĕрулми çинчи чечеке ӳсме паман пирки авăр вăйлăланать. Çĕрулми аврин çулçисем крахмал пухаççĕ, вăл ытларах çĕрулмие кайса, унăн тухăçлăхне ӳстерет.

Çĕрулми малтанхи тапхăрта хăй пухакан апата аврăн тăрринчи пайĕсене ытларах ярать, çĕрулмийĕ, авăр чечеке ларас умĕн çеç пулма тытăнать. Чечеке валли çĕрулми çĕртен нумай апат илет. Çĕрулми чечекĕ хуçалăхра та, çĕрулми çитĕнес тĕлĕшпе те кирлĕ мар.

Çĕрулми чечекне вăл сараличчен татса пăрахсан, чечеке каякан апат пĕтĕмпех тымара — çĕрулмине каять.

Мускаври селекци станцийĕн опычĕсем тăрăх, çĕрулми чечекне вăл сараличчен татса пăрахни çĕрулми тухăçлăхне ӳстерет, çĕрулми 5—10 кун маларах пулса çитет.

Çакна палăртмалла, çĕрулми чечеке ларсан çеç унăн чечекне татса пăрахни нумай усă памасть. Чечеке вăл сараличчен татса пăрахмалла. Çавăнпа та çак ĕçе халех тытăнмалла.

Агроном Р. ОСАНОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

МТС-ри парторганизаци тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре

Вăрнар МТС-ĕн коллективĕ, кăçал Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн коллективĕпе социализмла ăмăртăва тухса, хăй çине пысăк обязательствăсем илнĕ. [illegible] хăйсен вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Парторганизацири коммунистсем ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем трактористсемпе ытти работниксене хăйсен примерĕпе, большевикла сăмахпа ĕçре хавхалантарса пыраççĕ.

Акă, П. Тойдеряков юлташа илер. Вăл 4-мĕш бригадăна ертсе пырать. Унăн бригадинче коммунистсем татах та пур. Сураки вăхăтĕнче Тойдеряков юлташ пĕтĕм ĕçе малта пыракансен опычĕ çине таянса организациленĕ. Вăл коммунистсемпе малта пыракансене агитаци ĕçне активлăн явăçтарнă. Çапла коммунист Макаров боевой листок кăларнă, кăтарту хăми çине çырса пынă. Теприсем вулавçăсем пулса ĕçленĕ.

Ĕçе тĕрĕс организациленипе пула бригада сураки ĕçĕсен планне икĕ хут ирттерсе тултарнă, 2.200 килограмм горючи перекетленĕ. Часах акă бригада çултаăкри плана тултарса çитерет.

Çавăн пекех коммунист Алексеев ертсе пыракан бригада та малти ретре пырать. Бригадира В. Капирова коммунистка та тимлĕн пулăшать. Ку трактористка çав вăхăтрах тата 7-мĕш бригадăра агитатор пулса ĕçлет. Бригадăна мала кăларассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать. Сураки ĕçсен планне бригада 240 процент тултарнă, кунта политикăллă-массăллă ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Капирова юлташ трактористсене хаçат-журналсем вуласа парать, калаçусемпе докладсем ирттерет.

[illegible] менчĕксене пĕтĕрнĕ çĕре мобилизацилене. Парторганизаци активна ĕçе анлăн явăçтарать.

МТС коллективĕн хастарлă ĕçĕ сураки ĕçĕсен планне лайăх пахалăхпа ирттерсе тултарма, çапла колхозниксене тухăçлă тырпул никĕсне хывса хăварма пулăшрĕ.

Халĕ парторганизаци хăйĕн пĕтĕм вăйне тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçе мобилизацилет. МТС-ра комбайнсемпе молотилкăсене, ялхуçалăх машинисене юсас ĕç вĕçленсе пырать. Уйрăм бригадăсем машинăсене юсаса çитернĕ ĕнтĕ. Ку ĕçре те коммунистсем малта пыраççĕ. Тойдеряков юлташ бригади комбайнерсемпе сеялкăсене юсаса пĕтернĕ. Ытти коммунистсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем МТС рабочийĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе, социализмлă ăмăртăва лайăх организацилеме пулăшаççĕ.

Активпа ĕçлессине лайăхлатнă май парторганизаци йышĕ те ӳсех пырать. Паллă стахановецсем трактористсем А. Александрова, Смирнова, бригадир И. Николаев юлташсем парти ретне кĕме хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ.

Парторганизаци хăйĕн ĕçне ялхуçалăх ĕçсен планне вăхăтра та лайăх пурнăçа кĕртес тĕллеве пăхăнтарса туса пынин коммунистсем ĕçре малти вырăнта пулни МТС коллективĕ ăмăртура мала тухасси çине шанса тăма май парать.

Х. ЛИСИН.

Парти организацийĕсен хуçалăхĕнче большевикла йĕрке пулмалла

Парти документчĕсене шута илес тата алла парас йĕрке çинчен, парти членĕсемпе кандидачĕсене шута илес йĕрке çинчен ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăларнă инструкцисем райкомсемпе пуçламăш организацисен хуçалăхĕ мĕнле пулмаллине кăтартса параççĕ. Вăл инструкцисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыни парти хуçалăхĕнче большевикла йĕрке тума, çапла вара партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăхлатма май парать. Нумай парторганизацисен ĕçĕ çавна лайăх çирĕплетсе парать.

Буинскри сланец рудникĕнчи пуçламăш парторганизацинче парти документчĕсене тирпейлĕ пăхса усраççĕ. Парторганизаци секретарĕ Крузман юлташ протоколсемпе ытти документсене çырса тирпейлĕ пăхса усрать, учет ĕçне йĕркелессине тата ытти ĕçсене те ялан инструкцисенче кăтартнă пек туса пырать. Коммунистсен пухăвĕсене планпа палăртнă вăхăтра ирттереççĕ. Пуху протоколĕсене тĕрĕс çыраççĕ, вĕсене шанчăклă вырăнта усраççĕ. Çавăн пекех парторганизацине çĕнĕрен коммунистсем пыни çинчен тата коммунистсен пурнăçĕнче пулнă улшăнусем çинчен ВКП(б) райкомне вăхăтра пĕлтереççĕ. Пуху протоколĕсене те унта çийĕнчех çитереççĕ.

Парторганизацинче парти документчĕсене лайăх пăхса усрама кирли çинчен коммунистсене, уйрăмăнах çамрăк коммунистсене ăнлантарса панă. Кунта парти документчĕсене çухатни пачах пулман.

Парти хуçалăхне «Большевик», «Молния» колхозсенчи, вăрман хуçалăхĕ сумĕнчи организацисенче те тирпейлĕ тытса усраççĕ.

Чугун çул станцинчи, Тусари, Буденный ячĕпе тăракан колхозри парторганизацисенче вара пачах урăхла. Вĕсем пуху протоколĕсене райкома вăхăтра тăратмаççĕ. Ку ĕнтĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине райком енчен тĕрĕслесе пырас ĕçе чăрмав кӳрет. Коммунистсен пурнăçĕнче пулнă улшăнусем çинчен те вăхăтра пĕлтермеççĕ. Хурамалти тата «Правда» колхозри парторганизацисен секретарĕсем парти документчĕсене килĕсенче тытса усраççĕ.

Çак ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе, парти хуçалăхĕнче большевикла йĕрке тăвас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕн çине тăрса ĕçлемелле пулать.

П. КУРАКОВ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем!

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 15-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Котантен çурутравĕн никĕсĕнче союзниксем çĕнĕ территори йышăннă. Лессэ пунктĕнчен хĕвеланăçнерехре пирĕн патрульсем, тăшман хирĕç тăнине пĕтере-пĕтере, Сен-Жермен-сюр-Э пункчĕ урлă Мезьер пункчĕ патнелле куçса пынă. Эпир Лессэ патнелле çывăхарса пыратпăр. Бовэ тата Ла Журденри ялĕсене туртса илнĕ. Унтан темиçе миля хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем Ла-Лонд пунктне йышăннă, Э шывĕ хĕрринчи шыв илекен района тухнă. Пирĕн чаçсем, Горж тата Сен-Жермен урлă наступлени туса пырса, Ле Гранж пунктне çитнĕ те Омме пункчĕнчен кăнтăртарахра Горж шурлăхĕсенчен хĕвелтухăçнерехре пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ. Сентени ялĕпе Вир шывĕ хушшинче тата Сен-Ло хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн çарсем чылай вырăнсенче малалла куçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăну та пулман.

Пирĕн авиаци çаплах тăшман çарĕсемпе унăн вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 15-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем фронтăн сылтăм флангĕнче çаплах малалла куçса пынă, Лессэ хулипе çыпçанса ларнă ялсене кĕрсе кайнă, Э шывĕ районĕнчи шыв илекен вырăнсем патне темиçе миля фронт сарлакăшпе пырса тухнă. Сент-Оппортюн, Писсо тата Сен-Патрис-де-Клед ялĕсене тăшмантан тасатнă. Унтан хĕвелтухăçнерехре эпир, Гонфрекиль тата Ней урлă тухса, Сев шывĕ хĕррине çитрĕмĕр. Июлĕн 14-мĕшĕнче тăшман артиллерийĕ хытă персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене, вăрçă объекчĕсене тата унăн тинĕс суднисене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 16-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Июлĕн 15-мĕшĕнче фронтăн хĕвеланăçенчи пĕтĕм секторĕнче çырма-çатраллă вырăнсенче пехота хаяррăн çапăçнă. Сентени ялĕпе Перье хушшинчи çултан кăнтăртарахра тата Сен-Ло хули патне çурçĕрпе хĕвелтухăç енчен пымалли вырăнсенче союзниксен çарĕсем чылай пунктсенче каштах малалла куçнă. Енер каçхине Эвреси районĕнче Эске ялне ирĕке кăларнă. Çурçĕр тĕлĕнче пирĕн çарсем çав ялтан тухса каштах малалла куçнă.

Союзниксен истребитель-бомбардировщикĕсем июлĕн 15-мĕшĕнче каçхине Парижран 150 миля аяккарах выртакан Невер-Бурж-Орлеан-Тур районĕнче транспорт объекчĕсене атакăланă. Июлĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен соединенийĕ Невер тата Шалон-сюр-Марн чугун çул узелĕсене тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 16-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Фронтăн хĕвеланăç секторĕнче союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пынă. Карантан хулипе Мариньи хушшинчи çултан кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем Ла-Тиботри ялне ирĕке кăларнă. Омме Д'артене пунктĕнчен кăнтăртарахра та союзниксен çарĕсем малалла куçнă. Пирĕн çарсем Сен-Ло хулине çурçĕр-хĕвелтухăç енчен атакăлама пуçланă. Вĕсем пĕр миля ытла малалла куçнă, Эмели ялне ирĕке кăларнă, халĕ Сен-Ло хулинчен 1.500 ярдра ларакан пункта çитнĕ.

Унтан хĕвелтухăçнерехре Тилли-Эвреси районĕнче пирĕн çарсем Бретвиллет пунктне ирĕке кăларнă. Енер каçхине союзниксен чаçĕсем Эске районĕнче Эвресирен çурçĕртерехри çӳллĕ вырăнсем тăрăх 4.000 ярд таран малалла куçнă. Паян ирхине тăшман фрончĕн малалла тухса тăракан кукăрне пĕтерсе тăкнă, Гаврюс тата Бужи пункчĕсене ирĕке кăларнă.

Пирĕн вăтам бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн фронтри позицийĕсене тапăннисĕр пуçне тата Парижри, Дре хулинчи, Гренвиль хулинчи тата Аржантан çывăхĕнчи чугун çул объекчĕсене тапăннă. Германие кăнтăрла тапăннă чухне бомбардировщиксене хӳтĕлесе пынă истребительсем Люневильти чугун çул объекчĕсем çине тата Бельгири аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă».

Париж хулине эвакуацилени

ЖЕНЕВА, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцари радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх, Париж хули влаçĕсем хуларан урăх çĕре куçса кайма пултаракан çынсене пурне те Парижран тухса кайма хушнă, мĕншĕн тесен Парижра газ тата электричество пама пачах чарăнасси курăнса тăрать.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРЕСЕМ ЛИВОРНО ХУЛИНĔ ÇИТЕССИ 10 КИЛОМЕТР КĂНА ЮЛНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле 5-мĕш армин чаçĕсем Чечино шывĕпе Арно шывĕ хушшинче паха çӳллĕ вырăнсем туртса илнĕ. Тăшмана сывлăш çапăрма та памасăр, американецсен 5-мĕш армийĕнчи француз чаçĕсем июлĕн 14-мĕшĕнче Ареццо хулипе Ливорно хушшинчи çулсен паха узелне Поджибонси хулине туртса илнĕ, фронтăн пĕтĕм участокĕнче малалла куçнă. Унтан хĕвеланăçнерехре американецсен чаçĕсем Петтоли тата Кьянни пункчĕсене туртса илнĕ. Лигури тинĕсĕ хĕрринче союзниксен малти чаçĕсем Ливорно хулине çитесси мĕн пурĕ те 10 километр кăна юлнă. Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрне тупăсемпе вăйлăн персе тăнă. Сăртсен секторĕнче союзниксен çарĕсем Фабриано хули патне çывăхарса пыраççĕ. Адриатика участокĕнче лару-тăру улшăнман.

Енер союзниксен авиацийĕ нефть тасатакан тăватă завода тата Будапештри сортировка станцине тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн Италирипе Югославири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 8-мĕш армин чаçĕсем, тăшман хытă тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ареццо хули патне кăнтăр енчен пымалли вырăнти Монте-Линьяно ятлă çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Çак çӳллĕ вырăнта союзниксем кунтан çурçĕрелле выртакан территорие лайăх сăнаса тăма пултараççĕ. 8-мĕш армин малти чаçĕсем Ареццо хулине çитесси мĕн пурĕ те 5 километр çеç тăрса юлнă. Сăртсен районĕнче Перуджа хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çапăçакан малти бронетанковăй соединенисем Губбио хулипе Костаччаро хулине туртса илнĕ. Июлĕн 14-мĕшĕнче 5-мĕш арми чаçĕсем самаях малалла куçнă, фронтăн хĕвеланăç секторĕнче тăшман каллех хытă хирĕç тăрать. 5-мĕш армири француз чаçĕсем Поджибонси хулинчен хĕвелтухăçнерехре Кастеллина хулине туртса илнĕ. Американецсен чаçĕсем икĕ ял йышăннă, чылай участоксенче 1,5 километр таран малалла куçнă.

Енер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Плоешти районĕнчи (Румыни) нефть промыслисемпе нефть тасатакан заводсене тапăннă. Союзниксен тактика авиацийĕн шутĕнче тăракан самолетсем тăшманăн Çурçĕр Италири тата çапăçусен районĕнчи, çавăн пекех тата Югославипе Албанири çулйĕрсемпе ытти объектсем çине бомбăсем пăранă.

Тĕнчери лару-тăру

Иртнĕ эрнери вăрçă тата политика тĕлĕшĕнчи событисенчен чи пахараххи — Вильнюс хулине ирĕке кăларни пулчĕ. Совет Литвин столици çинче çĕнĕрен совет ялавĕ ялкăшать.

Нимĕçсем Вильнюсшăн хытă тăчĕç. Хулара çавăрса илнĕ гарнизон патне нимĕçсем çĕнĕрен-çĕнĕ вăйсем иле-иле пычĕç, анчах нимĕн те пулăшмарĕ. Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене Литван авалхи столицинчен çапса кăларчĕ, нумай асап тӳснĕ мухтавлă хулана — Литва халăхне, пĕтĕм совет çĕрне тавăрса пачĕ. Вильнюс хулине ирĕке кăларни çинчен калакан хыпара пĕтĕм совет халăхĕ савăнса та хавхаланса кĕтсе илчĕ.

Литвари халăхсем, Латвипе Эстони Советлă Социализмлă Республикисенчи халăхсем пекех, нумай хĕнхур тӳссе ирттерчĕç. Гитлерла йыткĕтĕвĕсем чăн малтан вĕсем çине сиксе ӳкрĕç. Вĕсен çĕрĕсене, хулисемпе ялĕсене ирсĕр захватчиксем çаратса пĕтерчĕç. Литва халăхне вара е пĕтерсе тăкнă, е чуралăха хăваласа кайнă. Халĕ ĕнтĕ Советлă Балтика тăрăхне фашистла пусмăртан пĕтĕмĕшпех ирĕке кăлармалли вăхăт çитрĕ. Ригăпа Таллин хулисене ирĕке кăларасси инçе юлмарĕ.

Нимĕçсем Советлă Балтика тăрăхне хăйсен «остланд» текен крайне кĕртнĕччĕ, вĕсем Балтика тăрăхĕнчи совет республикисене пĕтерсе тăкма хăтланчĕç. Анчах вĕсен ĕç тухмарĕ! Гитлерăн йĕрĕнчĕк хӳрешкин — Альфред Розенбергăн, «остланд» пуçлăхĕ пулнăскерĕн тата «душегубкăсен» ĕçне ертсе пынăскерĕн, халĕ Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе хăйĕн «управленине» пĕтерсе лартма лекрĕ. Тек ĕнтĕ «остланд» çук. Халĕ ĕнтĕ ирĕке тухнă тата çĕнĕрен ура çине тăракан совет çĕрĕ пур.

Нимĕçсем Вильнюс хулине «Балтика тăрăхне кĕмелли хапха» тенĕ. Анчах ăна хăюллăнах Германие пырса кĕмелли хапха теме пулать. Ĕç пĕтĕмпех ăçтан тата ăçталла каясси(н)чен килет. Нимĕçсем хĕвелтухăçнелле талпăнса пынă вăхăт иртсе кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле каять. Вăл малалла пырать, çапла çĕнтерӳллĕ наступлени туса пынипе вăрçа гитлерла Германи чиккисем патне ытларах та ытларах çывхартса пырать.

Гитлеровецсем шиклен(с)е ӳкнĕ. «Фюрер» хăйĕн ставкине Германи ăшнелле — шалалла куçарса кайнă та ĕнтĕ. Хĕвелтухăç Пруссие вăрçă пыракан зона тесе пĕлтернĕ. Нимĕçсем туса лартнă пур чăрмавсене те Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапса сирпĕнтерет. Вăл вăйлăн хирĕç тăракан тăшмана, унăн çарĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çапа-çапа аркатать; Хĕрлĕ Çар часах Совет Союзĕпе Германи хушшинчи мĕнпур анлă фронтра Совет çĕрĕн чиккисем патне çитет.

Пĕтĕм тĕнче куçĕ умĕнче совет воинĕсем хăйсен хăватлă вăйне, хăйсен çапăçусенче тĕрĕсленнĕ ăсталăхне кăтартса параççĕ. Тăшман хирĕç тăрать, вăл малалла та урса кайсах хирĕç тăрĕ. Вăл хăйĕн ирсĕр пурнăçне мĕнле пулсан та ытларах тăсасшăн. Хĕрлĕ Çар ăна канăç та, срок та памĕ, вăл, тăшмана аркатса, малалла, хĕвеланăçнелле каять. Хамăрăн союзниксемпе пĕрле, Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерĕ.

* * *

Гоголĕн «Ревизор» пьесинче кăтартнă унтер-офицер арăмĕ хăйне хăй хĕртсе илнĕ-и, е ун çинчен городничий суеçтерсе сăмах сарнă, — çакă халиччен те паллă мар. Анчах хăюллăнах çакна çирĕплетсе калама пулать: Гитлерăн Дитмар ятлă генералĕ вара хăйне хăй чăннипех те хĕртсе илнĕ. Çакна пĕлес тесен, унăн юлашки радиообзорне кăна вуласа тухмалла.

Паллах, пурте Дитмар «кĕтнĕ пекех» пулса иртрĕ.

«Эпир хамăрăн юлашки обзорсенче, — тенĕ вăл, — пĕтĕмпе тенĕ пекех Нормандии пирки калаçнă... Çав вăхăтрах акăлчансемпе американецсем Европăна килсе кĕнĕ малтанхи кунран пуçласах эпир кĕтсе тăни пулса иртрĕ: совет çарĕсем анлă масштабпа наступлени пуçласа ячĕç». Совет наступленийĕн уйрăмах пысăк хăрушлăхĕ çакăнта пулса тăрать, — тесе ăнлантарса парать генерал: — çав наступлени гитлерла Германи хапхи умĕнче сарăлса пырать. Дитмар хăйĕн обзорне те «Хапха умĕнче» тесе ят панă.

«Халĕ ĕнтĕ, — тесе çуйăхать шикленсе ӳкнĕ Дитмар, — событисем тӳрремĕнех çывăхра пулса пыраççĕ, вĕсене текех инçетри çухрăмсем йăвашлатмаççĕ, вĕсем пире юлашки решени йышăнасси умне илсе пырса тăратаççĕ... Барановичипе Молодечно, Лидăпа Вильно, — вĕсем пурте таçта хĕвелтухăçĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр çĕр талккишĕнче сапаланса выртакан хуласем пулса тăмаççĕ, вĕсем çителĕклех пирĕн çывăхра тăраççĕ. Çав пунктсем совет çарĕсем куçса килнин хăрушлăхне хăйсемех кăтартса параççĕ».

Фактсем Дитмартан вăйлăрах пулчĕç. Вĕсене пытарма çук. Анчах вĕсене мĕнле ăнлантарса памалла-ха? Генерал сехĕрленсех авкаланать. Вăл «тивĕçлĕ сăлтавсем пирки асăнса кăна иртсе кайма» пултарать. Анчах çакă та çителĕклĕ: Дитмарăн ирĕксĕрех Хĕрлĕ Çарăн нимĕçсенинчен пысăкрах вăйне те, совет стратегийĕ маларах тăнине те йышăнма лекет. «Эпир татах, — тет вăл, — лару-тăру пусмăрĕ айне лекрĕмĕр, çавăн пек лару-тăру вăл вăйлăрах противник чылай пунктсенче наступлени пуçласа яма пултарнă чухне çавнашкал тухса тăрать». Анчах ку та пĕтĕмпех мар-ха. «Çирĕплетнĕ пунктсем çинче никĕсленсе тăракан оборона мелĕ те» путланса ларнă иккен.

«Вăйлă çапăçусем, — тесе салхуллăн сӳпĕлтетет генерал, — фронта татса кĕресси патне илсе пычĕç, çав татса кĕнĕ шăтăксенчен танковăй тата моторизованнăй соединенисем сăрхăнса кĕчĕç. Çавăн пек шала кĕрсе каяссине противник Германи çарĕсем тытса тăракан позицисенчен аякран ирте-ирте кайса туса ирттерчĕ... Противник çав тери шала кĕрсе кайма пултарни уйрăм условисем туса хучĕ».

Хамăр енчен эпир çакна хушма пултаратпăр: çав «уйрăм условисем» нимĕç командованийĕшĕн пачах та ырă мар. Пуриншĕн те паллă çав секрета Дитмар хăех уçса парать. Вăл çапла калать: «Эпир çав тери лайăх мар условисем капланса килни çинчен калама пултаратпăр, вĕсем ĕçе татса паракан условисем пулса тăраççĕ».

Нимĕç çарĕсем тата Дитмар çав условисенчен ниепле те сăлăнса тухаймĕç. Генерал умне вара ĕç мĕншĕн çавăн пек пулса пынине «ăнлантарса парас», нимĕçсен шухăш-кăмăлне çĕклес задача лартнă. Вăл «юлашки вăйсене» пухма, вăхăта мĕнле те пулин хăйсемшĕн усăллăрах туса тăсма, «Германи территорине тӳрремĕнех хӳтĕлес задачăна пурнăçа кĕртме» чĕнет.

Нимĕçсем вăхăтшăн мĕн тума çавăн пек тунсăхланине ăнланмалла ĕнтĕ. Анчах гитлеровецсем вăрçа мĕнле майпа та пулин тăсма хăтланни вĕсене çапса аркатас(с)инчен çăлса хăварма пултараймасть.

* * *

Хаçатри пĕлтерӳ яланах пурнăç татăкĕ пулса тăрать. Нимĕнле çирĕп йĕрке тытса пынине пăхмасăрах, çынсем вилни çинчен калакан пĕлтерӳсем нимĕçсен фашистла хаçачĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах халĕ, ĕçсĕр юлнă штатски оккупантсем валли, хĕвелтухăçĕнчен тарнăскерсем тата тараканскерсем валли, вырăн ытларах парас тесе, вилнĕ çынсен хĕсĕнерех тăма лекет.

Çавăн йышши фашистла вăрă-хурахсем хĕвелтухăçĕнчен пуринчен малтан тарма тытăннă. Кăçалхи март уйăхĕнчех нимĕçсен «Фелькишер беобахтер» ятлă хаçатĕнче çакăн пек пĕлтерӳ вулама пулнă:

«40 çулхи предприяти руководителĕ, опытлă коммерсант, Украинăри пысăк компанире Финанс отделĕн начальникĕ пулнăскер, хальхи вăхăтра... империре, протекторатра (урăхла каласан, Чехословакире), генерал-губернаторствăра (урăхла каласан, Польшăра) çĕнĕ ĕç шырать, мĕнле ĕç пуласси пурĕпĕрех».

Пĕрремĕш номерлĕ «коммерсант» хыççăн черетре иккĕмĕш номерлĕ «коммерсант» тăрать, вăл ĕнтĕ апрельре «протекторатра» та, «генерал-губернаторствăра» та ĕç шырама ĕмĕтленмест. Вăл çапла пĕлтерет: «Çине тăрса ĕçлекен коммерсант, юлашки вăхăтра хĕвелтухăçĕнчи суту-илӳ предприятийĕн руководителĕ пулнăскер, çĕнĕ ĕç, май килсен мĕнле те пулин ют çĕршывра, шырать».

Виççĕмĕш оккупантшăн вара Варшавăра та пурнăç ырă мар. Вăл «икĕ çул хушши хĕвелтухăçĕнче ĕçленĕ», халĕ Варшавăра пурăнать, анчах унтан тухса каясшăн çунать тата курьер вырăнне те йышăнма хатĕр тăрать.

Пурте вĕсем «ăшă та улах», мĕнле те пулин «хăрушсăртарах» кĕтессем шыраççĕ. Пĕри, сăмахран, мĕнле те пулин шаларахри вырăнти «пысăк мар хулана», Альпăна вырăн пама ыйтать. Вĕсем пурте «хĕвелтухăçĕнче ĕçленĕ», халĕ вара хĕвеланăçне кайма та шикленсе тăраççĕ. Хĕвеланăçĕнче те пурнăç лăпкă марри кашнинчишĕн паллă-çке-ха! Пирĕн союзниксем Кан хулине туртса илчĕç. Халĕ ĕнтĕ союзниксемшĕн тăшман оборонине шаларах та хăватлăнрах пыра-пыра çапма анлă майсем уçăлаççĕ.

Гитлерла ирсĕрсем хĕвелтухăçĕнчен, путакан карап çинчен йĕкехӳресем тарнă пекех, тараççĕ. Анчах çак ирсĕрсем таçта тарса пытанма хăтлансан та, вĕсене тĕрĕслĕх сучĕн хĕçĕ шыраса тупатех. Тивĕçлипе суд сакки çине ларакан преступниксен ретĕнче халĕ ĕçсĕр юлнă колонизатор-вăрăхурахсем те хăйсен вырăнне тупĕç.

Я. ВИКТОРОВ.

КĔСКЕН

● Июнь уйăхĕнче Тегеран хули управĕнче йышăну пулса иртнĕ. Çав йышăнăва Тегеран хулин виçĕ урамне официальнăй йĕркепе çĕнĕ ятсем пама май туса ирттернĕ. Пĕр урамне Маршал Сталин ятне, тепĕр урамне Президент Рузвельт ятне, виççĕмĕш урамне Премьер-министр Черчилль ятне панă. Йышăнура Иран правительствин членĕсем, Совет Союзĕн тата Великобританин посолĕсем, Америка Ĕçĕсен поверенннăйĕ, меджлис депутачĕсем, хаçат-журналсен представителĕсем тата ыттисем те пулнă.

● Иртнĕ уйăхра Савойăра итальянец партизанĕсен тата француз партизанĕсен руководителĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Калаçусем питĕ туслă пулса иртнĕ. Малашнехи операцисенче партизансен ĕçĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пырас тĕлĕшпе паха мерăсем йышăннă.

● Союзниксен разведки панă хыпарсем тăрăх, Çĕнĕ Гвинея утравĕн çурçĕр çыранĕсенче çавăрса илнĕ японецсен 18-мĕш армийĕнче выçăпа тата сывлăшран тăтăшах бомбăсем пăрахнипе пула 15.000 çынтан кая мар вилнĕ. Ку вăл çак армин тăваттăмĕш пайĕ пулса тăрать.

Заемсен икĕ вылявĕ

Июлĕн 15-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕн Октябрь залĕнче заемсен икĕ вылявĕ пулса иртнĕ. Пĕри — Иккĕмĕш Пятилетка Заемĕн (4-мĕш çулхи кăларăмĕн) 32-мĕш вылявĕ, тепри — СССР Оборонине çирĕплетмелли заемăн 27-мĕш вылявĕ.

Иккĕмĕш Пятилетка Заемĕн (4-мĕш çулхи кăларăмĕн) вылявĕнче 1.670.000 выигрыш, пĕтĕмпе 273 миллион та 920 пин тенкĕлĕх пулнă.

СССР Оборонине çирĕплетмелли заемăн вылявĕнче 410.750 выигрыш, пĕтĕмпе 63 миллион та 818 пин те 800 тенкĕлĕх пулнă. (ТАСС).

С. К. Карапетян—Арменин ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ

ЭРЕВАН, июлĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Армян ССР-ĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Саак Карапетович Карапетяна Армян ССР-ĕн ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Главнефтеснабăн чăваш управленине строительствăра ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç йĕркелекен, бухгалтер, главнăй механик тата тĕрлĕ рабочисем.

Ĕçлеме илнисене хваттер тата пахчасем параççĕ. Ларек пур. Столовăй уçăлать. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом печати, 4-й этаж, комната № 44. Телефон 3—83. Главнăй инженертан ыйтмалла.

Чăвашсен аш-какай трестне çакăн пек работниксем кирлĕ: кадрсен отделĕн начальникĕ, секретарь-машинистка, инженер-технологсем, бухгалтерсем, плановиксем, выльăх врачĕ, чĕртавар отделĕн начальникĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Тельмана, 6. Телефон 5—25.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1-73, один звонок.

6—5

Инвалидсен Шупашкарти «Чебторгин» артельне çакăн пек рабочисемпе служащисем кирлĕ: главнăй бухгалтер, атă çĕлекенсем, çĕвĕçсем, трикотажницăсем, сехет тӳрлетекен мастер тата ученик, снабжени агенчĕ, кассир тата техничка. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ленинградская, 20.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторăн —0—23.

НТ 00264 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 и. д. Тираж 14.400 экз.